Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

38 (7678) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи майăн (çу) 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Çĕнтерӳ кунне паллă турăмăр

## Никам та айккинче юлмарĕ



Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче 1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тĕнчене чĕркуçлентерес тĕллевлĕ пулнă фашизма çапса аркатнăранпа 64 çул çитнине Раççей халăхĕ пĕр çын пек уявларĕ. Истори хăйĕн утăмне чакармасть: акă çав паллă кунран тепĕр çулталăк иртсе кайрĕ. Çулсем иртнĕçемĕн çеç эпир 1945 çулхи Çĕнтерӳ кунĕ Çĕр планета çинчи пĕтĕм пурнăçа улăштарнине куратпăр-туятпăр. Аслă çапăçу хирĕсенчен Чăвашран кайнă салтаксем çеç 106 пин çын тăван çĕре таврăнайман. Вăл йышра Муркашсем те пайтах.

Çулсем иртеççĕ те вĕсен ылмашăвĕ пирĕн ума асаттесемпе аттесен паттăрлăхĕн пĕлтерĕшне çĕнетсерех те туллинрех кăларса пырать.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

## Тавах, ветерансем, Çĕнтерӳшĕн!

Районти пĕр киле те кĕмесĕр хăвармарĕ Аслă Отечественнăй вăрçă. Камăн мăшăрĕ, камăн ывăлĕ, камăн тăванĕ çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайрĕ хаяр вăрçа. Фронта кайнă 9845 салтакран çурри ытла – 5491-шĕ каялла таврăнаймарĕ. Çулсем иртнĕçемĕн яла Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксен йышĕ те чаксах пырать. Аслă Çĕнтерӳ 64 çул тултарнине Муркаш районĕнче пĕтĕмпе те 131 ветеран кĕтсе илчĕ. Тăлăх арăмсен йышĕ те 26 çеç юлчĕ.

Майăн 7-мĕшĕнче районти Культура çуртне кашни ял тăрăхĕнчи вăрçă участникĕсем, вырăнсенчи ветерансен канашĕсен ертӳçисем, районти ветерансен канашĕн членĕсем, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи ватă çынсен канашĕн членĕсем пуçтарăнчĕç. Паян-ыран салтак тумне тăхăнма хатĕрленекенсем те килчĕç ку уява. Икĕ ăру çыннисен тĕл пулăвĕ Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕн В.В. Буклаковăн саламĕпе пуçланчĕ.

– Мускав стени патне çитнĕ хаяр тăшмана çапса аркатса, эсир Тăван çĕршыв ирĕклĕхне сыхласа хăварма пултартăр. Тавах сире пире мирлĕ пурнăç парнеленĕшĕн, – район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн тав сăмахĕсем те пур вăрçă ветеранĕсен, тыл ĕçченĕсен, тăлăх арăмсен ячĕпе пулчĕ. Юрий Александрович кашни ветерана хăй ятĕнчен çырнă салам открытки тата парне



пачĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов салам сăмахĕ хыççăн «День Победы» юрласа ячĕ. Зал тăвăллăн алă çупнипе тулчĕ.

Иртнĕ вăрçăра пирĕн 5 ентеш – Г.А. Алексеев, Я.А. Анисимов, Б.М. Васильев, А.И. Воробьев, И.Г. Мешаков Совет Союзĕн Геройĕн ятне илчĕç. А.А. Быков вара – Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ. Залра ларакансем пĕрле йĕркипе аса илчĕç вĕсене. Паянхи çамрăксем те вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ. Н. Смирновпа (вилнĕ хыççăн) Е. Борисов çапăçусене хутшăнса Раççей Геройĕсем пулса тăчĕç. «Вĕри точкăсенче» пуç хунă ытти салтаксен ячĕсем те асрах.

–Эпир те сирĕн пекех Тăван çĕршыва чыслă сыхлăпăр. Сирĕн ята ямăпăр, – терĕ пулас салтаксен ячĕпе Ф. Васильев, ветерансене Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламланă май.

–Маттур та паттăр пулăр, анчах шур çӳçлĕ ветерансен шăпи сире килсе ан çаптăр, – терĕ район пуçлăхĕ çамрăксене. Ветерансем вĕсене асăнмалăх парнесем пачĕç. Кĕлĕ çуртĕнче Федор атте вĕсене телейлĕ çул пиллерĕ.

Ветерансен вара аса илмелли нумай пулчĕ çак кун. Юнкă ял тăрăхĕнчи Г.Н. Илугинăн та, И.А. Васюхинăн та. Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи вăрçă витĕр тухнă Н.Л. Яковлев хăш-пĕр вăрçă ветеранĕсене хăй çырнă 5 кĕнекерен пĕрне парнелерĕ. Ветерансен районти канашĕн ертӳçи М.В. Виноградова Çĕнтерӳ паттăрĕсене саламланă май вăрçă ачисем те вăл вăхăтра аслисемпе танах Çĕнтерӳшĕн ырми-канми ĕçленине палăртрĕ.

Икĕ ăру тĕл пулăвĕ кĕтмен парнепе вĕçленчĕ: нумай çулсем хыççăн çĕнĕрен йĕркеленнĕ ветерансен хорĕ концертпа савăнтарчĕ. Çав кунах районти Культура çуртĕнчех каçхине Муркаш ял тăрăхĕнче пурăнакасем валли йĕркеленĕ хаваслă пуху хыççăн та зал тăвăллăн алă çупса тав турĕ артистсене.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: уяв саманчĕ.**

**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн

## Муркаш ялĕ илемленет

Иртнĕ çул район центрĕ Республика кунне уявланă май палăрмаллах çĕнелсе улшăнчĕ. Урамсенче çулсене çĕнĕрен сарчĕç, тротуарсене юсарĕç. Çĕнĕрен тытнă картасем те Муркаш ялне çĕнĕ сăн кĕртрĕç. Çĕршер-çĕршер чечек вара район центрне уяв илемĕ кӳчĕ.

Кăçал та Муркаш уяв тумĕ тăхăнма тытăнчĕ. Иртнĕ эрнере урамсенче пĕрремĕш чечексене лартрĕç. Иртнĕ çулхи пекех хĕрлĕ-сарă-кĕрен чечексем Муркашсене те, вĕсен хăнисене те мĕн кĕркуннеччченех савăнтарасса шанас килет.

**Сăн ӳкерчĕкре: район администрацийĕн ĕçченĕсем чечексем лартаççĕ.**

**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Çемье кашни çыннăн пурнăçĕнче тĕп вырăн йышăнать. Ача мĕнле çын пулса ӳсесси, унăн малашнехи пурнăçĕ епле пулассси йăлтах çемьерен пуçланать. Кунтах вăл ăс-хакăлпа нравственность тĕлĕшĕнчен пур енлĕн аталанса ӳсет, ырăпа усала уйăрма хăнăхать, ырă ĕççем тума вĕренет. Çемьери юратупа килĕшӳ ачасене пурнăç çулĕпе тĕрĕс утма пулăшаççĕ. Вĕсем ĕçе юратма вĕренесси, ватăсене сума сăвасси, яваплăха туйса ӳсесси, сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси – мĕн пур ырă енсем йăлтах çемьерен пуçланаççĕ. Çирĕп çемьере ашшĕ-амăшĕн ăшшине, юратăвне туйса ӳсекен ачасем нимĕнле йывăрлăх умĕнче те çухалса каймаççĕ, ырă кăмăллă пулаççĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупаççĕ. Çавăнпа та çĕршыв малашлăхĕ те çемьепе уйрăлми тачă çыхăннă. Ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе патшалăх шайĕнче нумай ĕççем туса ирттереççĕ.

Сире пурне те хăвăрăн çемье телейĕшĕн хăвăртан килнине пĕтĕмпех тума çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатăп. Эсир ачăрсемшĕн ырă тĕслĕх пуласса та шанатăп. Районти кашни килте юрату, килĕшӳпе тату пурнăç, телей хуçаланччăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Çур аки – 2009

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çу уйăхĕн 12-мĕшĕ тĕлне çур аки ĕçĕсем епле пынине кăтартни**

***Колонкăсенче: 1. Çĕр хатĕрленĕ (процентпа). 2. Çуртрисем акмалли план (гектарпа). 3. Çуртрисем акнă (процентпа). 4. Пĕр çул ӳсекен курăксем акнă (процентпа).***

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 100 | 600 | 101 | 0 |
| «Волга» | 100 | 185 | 70 | – |
| «Восток» | 100 | 250 | 100 | – |
| «Герой» | 100 | 468 | 116 | 73 |
| Ильич яч. хис. | 100 | 475 | 100 | 100 |
| ВТМ | 91 | 100 | 80 | – |
| Ленин яч. хис. | 54 | 455 | 62 | 0 |
| «Лидер» | 26 | 500 | 0 | 0 |
| «Моргаушская» | 100 | 66 | 100 | – |
| «Оринино» | 114 | 345 | 116 | 215 |
| «Передовик» | 61 | 662 | 57 | – |
| «Свобода» | 84 | 990 | 100 | 67 |
| «Сеятель» | 85 | 350 | 72 | – |
| Суворов яч. хис. | 97 | 481 | 64 | 0 |
| «Рассвет» | 82 | 330 | 76 | – |
| «Ударник» | 95 | 1067 | 80 | 81 |
| «Хлебороб» | 77 | 130 | 54 | – |
| Чапаев яч. хич. | 73 | 380 | 79 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 100 | 488 | 100 | – |
| «ДаАн» | 48 | – | – | – |
| Мичурин яч. хис. | 68 | 500 | 60 | – |
| «Колос» | 100 | 50 | 100 | – |
| Агросоюз «Картофель» | 60 | – | – | – |
| РАЙОНĔПЕ | **84,5** | **10298** | **80,2** | **37** |

Район администрацийĕнче

## Нумай çул ĕçленĕшĕн

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă***

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:***

**Елена Геннадьевна ВОРОБЬЕВАНА**, «Оринино» хуçалăх ĕçченне.

**Екатерина Ильинична ЗАМКОВАНА**, «Оринино» хуçалăхри Атапай фермин уйрăм ертӳçине.

**Любовь Федоровна МОРОЗОВАНА**, «Оринино» хуçалăхри сысна пăхакана.

Саламлатпăр



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан ĕçчен те чунĕпе илемлĕ, кăмăлĕпе вашават, юратнă аннене, ăшă кăмăллă асаннене, ырă кăмăллă кукамая тата хисеплĕ тăванăмăра – **Ирина Александровна АВИЛОВАНА** паян 70 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăхпа, уйхир пек пуян кĕрекепе татах та нумай çул телейлĕ пурăнма сĕнетпĕр. Тавах сана эсĕ пурришĕн! Эсĕ пирĕн пурнăç илемĕ!

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕ, мăнукĕсем тата ытти йышлă тăванĕсем.**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, ĕç тата тыл ветеранне – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Пелагея Тимофеевна ПЕТРОВАНА** 90 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Кашмашри шкулта 1944 – 1977 çулсенче пуçламăш классене вĕрентсе çĕршер ачана тивĕçлĕ пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине çирĕп тухма пулăшрăр. Паян вĕсем эсир пуçласа панă ăсшăн савăнаççĕ, пĕр çын пек пулса Сире татах ял çыннисене савăнтарса пурăнма, çамрăксене ăслă шухăшсемпе хавхалантарма сĕнеççĕ. Тăван çĕршыв аталанăвĕнче хуйхă-суйхăна сахал мар чăтса ирттертĕр пулсан та, пурнăçри йывăрлăхсем Сирĕн пуçа усмарĕç. Тулли кĕрекере паян Эсир хăвăр вĕрентнĕ ачăрсемпе те вĕсен çемйисемпе, шкулта пĕрле ĕçленĕ ĕçтешĕрсемпе, паян Сирĕн ĕçĕре малалла тăсакансемпе килетĕр. Пирĕнпе пĕрле пурăнма эпир Сире малашне те ырлăх-сывлăх сунатпăр, телейӳ тăтăшах юнашар пуласса шанатпăр.

**Салампа Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ.**